Приоритетлӑ наци проекчӗсем

# Диспансеризаци ҫинчен

Сывлӑха сыхлас тӗлӗшри наци проекчӗн тӗп мероприятийӗсенчен пӗри ӗҫлекен ҫынсен сывлӑхне тӗрӗслесе тӑрасси, чире малтанхи тапхӑрта тупса палӑртса сиплесси пулса тӑрать. Ҫав тӗллевпе 2006 ҫултан тытӑнса вӗрентӳ, сывлӑха сыхлас, социаллӑ хӳтлӗх, культурӑпа спорт, наукӑпа тӗпчев ӗҫӗпе ҫыхӑннӑ 35-55 ҫулсенчи патшалӑх тата муниципаллӑ учрежденисенче вӑй хуракансем тӗлӗшпе хушма диспансеризаци ирттереҫҫӗ, сиенлӗ тата хӑрушӑ производство факторӗсемпе ҫыхӑннӑ ҫынсем тӗлӗшпе хушма медицина тӗрӗслевӗ ирттереҫҫӗ.

Ӗҫлекен граждансен хушма диспансеризацийӗпе хушма медицина тӗрӗслевне ирттерни социаллӑ пӗлтерӗшлӗ чирсене вӑхӑтра тупса палӑртса эффективлӑ сиплессипе ҫыхӑннӑ. Кунта сахӑр диабечӗ, туберкулез, онкологи тата чӗрепе юн тымарӗсен, тӗревпе хускану органӗсен чирӗсем кӗреҫҫӗ. Шӑпах ҫак чирсемпе чирлесе Раҫҫей Федерацийӗнче ӗҫлекен ҫынсем чылай вилеҫҫӗ тата инвалида тухаҫҫӗ.

Диспансеризаципе хушма медицина тӗрӗслевӗн программипе килӗшӳллӗн специалист тухтӑрсем сывлӑха тӗрӗслеҫҫӗ. Кусем вӗсем эндокринолог, невролог, хирург, уролог, акушер-гинеколог. Кунпа пӗрлех лаборатори тата функционаллӑ тӗпчевсем ирттереҫҫӗ: юнӑн клиника анализӗ, шӑкӑн клиника анализӗ, юнри холестерин тата сахӑр шайне палӑртни, электрокардиографи, флюорографи, маммографи тата сӗт железисене ультразвукпа тӗпчени.

Обязательнӑй медицина страхованийӗн Чӑваш Республикинчи территори фончӗ бюджет сферинче ӗҫлекенсене хушма диспансеризаци ирттерме каякан тӑкаксене саплаштарма 32 сиплевпе профилактика учрежденийӗпе килӗшӳсем тунӑ. Кӑҫалхи октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне бюджет сферинчи 28361 ҫыннӑн сывлӑхне тӗрӗсленӗ. Ку вӑл ҫулталӑк планӗн 86,5 процентне танлашать. Вӑл шутран 15714 ҫын хушма диспансеризаципе вӗҫленӗ.

Диспансеризаци ирттернисем хушшинче 66,7 процентне хулара пурӑнакансем, 33,3 процентне ялти ҫынсем. Вӗрентӳ сферинче ӗҫлекенсем 49,7 процент, сывлӑха сыхлас ӗҫре вӑй хуракансем 42 процент, культурӑпа спорт ӗҫӗпе ҫыхӑннисем 5,7 процент, социаллӑ хӳтлӗх органӗсенче ӗҫлекенсем 2,6 процент, наукӑпа тӗпчев учрежденийӗсенче ӗҫлекенсем 0,01 процент.

Тӗпчев итогӗсем тӑрӑх диспансеризаци витӗр тухнисене сывлӑх шайне кура ушкӑнсене пайланӑ. 1-мӗш ушкӑн – 10,8 процент, 2-мӗш ушкӑн – 15,2 процент, 3-мӗш ушкӑн – 62 процент, 4-мӗш ушкӑн – 11,2 процент, 5-мӗш ушкӑн – 0,12 процент.

Тупса палӑртнӑ чирсем хушшинче эндокрин системин, апатланассин тата япаласен ылмашӑвӗ пӑсӑлнин чирӗсемпе аптӑракансем 29 процент, юн ылмашӑвӗн чирӗпе аптӑракансем 14 процент, нерв чирӗсемпе чирлекенсем 12,2 процент, шӑкпа ар системин чирӗсемпе чирлекенсем 14,3 процент, куҫ чирӗсемпе чирлекенсем 11,3 процент, шӑмӑпа мышцӑсен чирӗсемпе чирлекенсем 10,5 процент.

Тӗрӗслев итогӗсемпе диспансеризаци витӗр тухнӑ ҫынсен 29,8 процентӗн сывлӑхне пӑхса тӑма йышӑннӑ, 1622 ҫынна амбулаторипе поликлиника учрежденийӗсенче сиплене, 74 ҫынна стационарсене вырттарнӑ.

Ҫак вӑхӑта сиенлӗ тата хӑрушӑ производство факторӗсемпе ҫыхӑннӑ ҫынсен сывлӑхне тӗрӗслеме каякан тӑкаксене саплаштарма 27 медицина учрежденийӗпе килӗшӳсем тунӑ. Октябрӗн 10-мӗшӗ тӗлне 12793 ҫыннӑн хушма медицина тӗрӗслевне ирттернӗ, вӑл шутран 6134 ҫын тӗрӗслеве пӗтӗмпех вӗҫленӗ. Хушма медицина тӗрӗслевӗн итогӗсем ҫавӑн пирки калаҫҫӗ: ӗҫлекенсем хушшинче пӗтӗмӗшле сывӑ ҫынсем 23,4 процент, 19,2 процентӗн чир аталанас хӑрушлӑх пур, вӗсемпе профилактика мероприятийӗсем ирттермелле, 45,4 процентӗн сывлӑхне диагноза тӗрӗс палӑртма тата амбулатори условийӗсенче сиплеме тепӗр хут тӗпчемелле, ӗҫлекенсен 12 процентӗ хронически чирсемпе чирлет.

**Чӑваш Республикин Сывлӑха сыхлас ӗҫ тата социаллӑ аталану министерстви.**

Спорт хыпарӗсем

# Ҫитӗнӳсем ҫук мар

**Октябрӗн 19-мӗшӗнче** Ҫӗнӗ Шупашкар хулинче велокросс енӗпе Раҫҫей кубокне ҫӗнсе илессишӗн 7-мӗш тапхӑр ӑмӑртӑвӗсем иртнӗ. И.В. Воробьев тренер-преподавателӗн воспитанникӗсем унта япӑх мар кӑтартусем тунӑ. Хӑйсен ӳсӗм категорийӗсенче Людмила Филиппова 3-мӗш, Ирина Волкова 1-мӗш, Татьяна Волкова 2-мӗш, Наташа Федотова 3-мӗш вырӑнсене йышӑнма пултарнӑ.

**Октябрӗн 21-мӗшӗнче** вара Шупашкар хулинче велокросс енӗпе Раҫҫей кубокне ҫӗнсе илессишӗн 8-мӗш тапхӑр ӑмӑртӑвӗсем иртнӗ. Хӑйсен ӳсӗм категорийӗсенче Л. Филиппова (2-мӗш вырӑн), М. Порфирьева (6-мӗш вырӑн), С. Федотова (7-мӗш вырӑн), Е. Казамбаев (10-мӗш вырӑн) ӳсӗмлӗрех пулнӑ.

**Октябрӗн 21-мӗшӗнчех** Сӗнтӗрвӑрри районӗнчи Октябрьски ялӗнче Раҫҫей тава тивӗҫлӗ спорт мастерӗн, XXVI Олмип вӑййисен чемпионкин Елена Николаеван парнисене ҫӗнсе илессишӗн хӗвӑрт утассипе Раҫҫей шайӗнчи ӑмӑртусем иртнӗ. Нина Охотникова 3 километрлӑ дистанцире 1-мӗш, Ирина Портнова 2 километрлӑ дистанцире 2-мӗш, Марина Смирнова 2 километрлӑ дистанцире 4-мӗш, Олеся Охотникова 3 километрлӑ дистанцире 5-мӗш вырӑнсене йышӑнма пултарнӑ.

**Ю. ЕРШОВ,**
**районти В. Егорова ячӗпе хисепленекен ачасемпе ҫамрӑксен Олимп резервӗсен спорт шкулӗн директорӗн вӗрентӳпе воспитани парас енӗпе ӗҫлекен ҫумӗ.**

**Октябрӗн 21-мӗшӗнче** Муркашри Спорт ҫуртӗнче районти ял хуҫалӑх предприятийӗсен, организацисен тата учрежденисен физкультура коллективӗсем хушшинче мала тухассишӗн кире пуканӗ ҫӗклессипе спорт ӑмӑртӑвӗ иртнӗ. Ку ӑмӑрту ӗҫ ҫыннисен спартакиадин шутне кӗнӗ. Ӑмӑртусене 4 команда хутшӑннӑ. Кусем вӗсем «Моргаушрайбыт» предприятин, «Оринино» тата Ильич яч. хис. хуҫалӑхсен, «Моргаушская» строительство организацийӗн командисем.

Хӑйсен виҫе категорийӗсенче «Оринино» хуҫалӑхри Михаил Музыков, Ильич яч. хис. хуҫалӑхри Константин Васильев, «Оринино» хуҫалӑхри Сергей Алексеев, «Моргаушская» строительство организацийӗнчи Алексей Козлов, «Моргаушрайбыт» предприяти директорӗ Александр Давыдов ҫӗнтерӳҫӗсем пулса тӑнӑ.

17 ҫула ҫитмен яшсем хушшинче 60 килограма ҫитиччен виҫе категорийӗнче Муркаш лицейӗнче пӗлӳ пухакан Артур Суминпа Ким Лукин 1-мӗшпе 2-мӗш вырӑнсене пайланӑ. 55 килограма ҫитиччен виҫе категорийӗнче Муркаш лицейӗнчи Юрий Михайлов, 80 килограма ҫитиччен виҫе категорийӗнче Йӳҫкасси шкулӗнчи Сергей Тимофеев ҫӗнтерӳҫӗсем пулса тӑнӑ.

Командӑсен хушшинче вара 1-мӗш вырӑна «Оринино» хуҫалӑх команди йышӑннӑ, «Моргаушская» строительство организацийӗн команди – 2-мӗш тата Ильич яч. хис. хуҫалӑх команди – 3-мӗш.

**Октябрӗн 21-мӗшӗнче** Етӗрне хулинче ЧР Президенчӗн кубокне ҫӗнсе илессишӗн шкул ачисен IX Спартакиади шучӗпе шахмат енӗпе зонӑри ӑмӑртусем иртнӗ. Зона ӑмӑртӑвӗсене 5 команда хутшӑннӑ, ҫав шутра пирӗн район команди те. Хӗрӳ кӗрешӳре пирӗн район команди 1-мӗш вырӑн йышӑннӑ, финала тухма пултарнӑ. Финал ӑмӑртӑвӗсем вара Шупашкар хулинче ноябрь уйӑхӗнче иртӗҫ.

**Октябрӗн 22-мӗшӗнче** вара Етӗрне хулинчех ЧР Президенчӗн кубокне ҫӗнсе илессишӗн шкул ачисен IX Спартакиади шучӗпе сӗтел ҫи теннисӗ енӗпе ӑмӑртусем иртнӗ. Унта хутшӑннӑ 5 команда хушшинче пирӗн район команди 2-мӗш вырӑна тивӗҫнӗ, финала тухнӑ.

Ӑнӑҫу сунатпӑр районти спортсменсене!

**Район администрацийӗн вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики тата физкультурӑпа спорт пайӗ.**

Изменения в законодательство

# Еще раз о «дачной амнистии»

1 сентября 2006 года вступил в силу Федеральный закон “О внесении изменений в некоторые законодательные акты Российской Федерации по вопросу оформления в упрощенном порядке прав граждан на отдельные объекты недвижимого имущества” (Закон о “дачной амнистии”), в соответствии с которым установлен упрощенный порядок оформления документов для государственной регистрации права собственности граждан.

В Чувашской Республике новый закон затрагивает интересы нескольких сотен тысяч обладателей огородов, садов, дач, гаражей, жилых домов, при этом назвать точную цифру владельцев объектов недвижимости, подпадающих под действие закона, крайне сложно.

Управление Федеральной регистрационной службы по Чувашской Республике будет уделять особое внимание организации работы по реализации положений Закона о “дачной амнистии” и своевременно информировать всех заинтересованных лиц о ходе “дачной амнистии”.

Приказом Управления Федеральной регистрационной службы по Чувашской Республике сокращен срок государственной регистрации прав граждан в упрощенном порядке с 30 до 20 календарных дней.

Несколько слов о самом Законе и тех нововведениях, которые им установлены.

Идеология Закона - максимально облегчить жизнь россиянам, не успевшим по тем или иным причинам зарегистрировать право собственности на землю или возведенные на ней постройки. До 1 сентября это занимало много времени, отнимало массу сил и стоило неоправданно больших денег.

Закон распространяется на две группы объектов. Первая – это земельные участки, полученные в свое время гражданами или их объединениями под дачи, садоводство, огородничество, ведение личного подсобного хозяйства (ЛПХ), под индивидуальное жилищное строительство (ИЖС) или гаражное строительство. Второй группой объектов являются строения: дачи, садовые домики, постройки на дачных участках (бани, гаражи), а также индивидуальные жилые дома на участках, предназначенных под ИЖС, ведение личного подсобного хозяйства, а также индивидуальные гаражи, построенные на участках, предоставленных для гаражного строительства.

**ОФОРМЛЕНИЕ ПРАВ НА ЗЕМЛЮ**

Для того чтобы начать упрощенную регистрацию на землю, у гражданина должны быть соответствующие документы: решение органов местного самоуправления о предоставлении земельного участка, государственный акт о праве, свидетельство о праве и др. В таких документах может быть указан различный вид права: собственность, постоянное (бессрочное) пользование, пожизненное наследуемое владение, безвозмездное срочное пользование. При этом в любом случае зарегистрировано будет право собственности гражданина. Если же не указан никакой вид права или, наоборот, указано несколько видов одновременно, гражданина также может зарегистрировать право собственности.

Если гражданину предоставлен земельный участок для ведения личного подсобного хозяйства, но ему при этом не оформили соответствующие документы, он может представить в регистрирующий орган выписку из похозяйственной книги.

Выписка из похозяйственной книги о наличии у гражданина права на земельный участок является документом – основанием для государственной регистрации прав на земельный участок, предназначенный для ведения личного подсобного хозяйства и расположенный в населенном пункте (приусадебный земельный участок) или за пределами населенного пункта (полевой земельный участок). Выписку из похозяйственной книги в двух экземплярах выдает орган местного самоуправления по месту нахождения земельного участка при обращении заинтересованного лица.

Если Земельный кодекс разрешал собственнику жилого дома однократно приватизировать участок под ним, то по нынешнему закону речь о приватизации не идет. Если у гражданина в бессрочном пользовании или на праве наследования несколько объектов недвижимости, можно оформить в собственность их все.

Для оформления права собственности на землю необходимо провести межевание и кадастровый учет участка.

Раньше много нареканий при оформлении прав на дачу вызывали землеустроительные работы, так называемое межевание. Порой доходило до того, что брали за эту услугу едва ли не дороже стоимости дачного домика. С вступлением в силу нового закона предельная стоимость услуг может быть установлена субъектом Российской Федерации на период до 1 января 2010 года.

Очень часто реальные границы и площадь земельных участков не совпадают с теми, что значатся в документах. Закон разрешил эту проблему, при этом законодатель исходи из презумпции “невиновности” собственника: презумпции правильности предъявляемого им документа, презумпции пригодности строения, презумпции добросовестности владения. Однако для оформления “излишков” в свою собственность возможно при соблюдении нескольких условий:

- из “излишка” нельзя сформировать самостоятельный участок (расхождение не должно превышать минимальный размер, установленный в соответствии с нормативным правовым актом субъекта Российской Федерации или органа местного самоуправления для земель различного целевого назначения и разрешенного использования),

- границы должны быть согласованы с соседями (должны быть их подписи).

**Начальник-государственный регистратор Моргаушского отдела Управления ФРС по ЧР Л.В. ИВАНОВА.**

**(Окончание в следующем номере.)**

Тӗл пулу

## Ватӑсене ӑшӑн саламларӗ

Кӑҫал пирӗншӗн Ватӑ ҫынсен кунӗ уйрӑмах асра юлчӗ. Шупашкар районӗнчи «Вега» санаторире канакансемпе тата сипленекенсемпе тӗл пулма ҫав кун Чӑваш Республикин сывлӑха сыхлас ӗҫ министрӗ Н.В. Суслонова килчӗ. Уявра ташларӑмӑр, юрларӑмӑр, ҫамрӑклӑха аса илтӗмӗр. Министр 100 ветерана чечексемпе парнесем пани уйрӑмах кӑмӑла уҫрӗ. Нина Владимировна ватӑ ҫынсене манмасть, вӗсемпе час-часах тӗл пулма тӑрӑшать. Тавах ӑна ватӑ ҫынсене манманшӑн.

**П. ИВАНОВСКИЙ.**


## Пӗлтерӳсем. Объявления

**ОАО «Моргаушский молочный завод», расположенный по адресу: с. Моргауши, ул. Чапаева, д. 65, объявляет о приеме на постоянную работу водителя автомобиля, машиниста аммиачно-холодильных установок и лаборанта производственно-технологической лаборатории. Претенденты должны иметь соответствующие документы по специальности. Кроме того на временную работу приглашается уборщица производственных и служебных помещений.**

**Аттестат о среднем образовании А № 825979, выданный Юнгинской средней школой в 1994 году на имя Иваковой Татьяны Порфирьевны, считать недействительным.**

**Магазин «Стройхозтовары» (напротив молзавода) предлагает: керамзитобетонные блоки, шифер, цемент, рубероид. Предоставляются транспортные услуги.**
**Тел.: 8-927-862-27-02, 8-960-307-41-78, 8-927-851-4782. 1-2.**

**Март уйӑхӗнче пӗрремӗш хут пӑруламалли хура-шурӑ тӗслӗ тынашки сутатпӑр.**
**Телефонӗсем: 2-16-26, 2-23-78, 8-906-130-47-64.**

**Февралӗн 19-мӗшӗнче пӗрремӗш хут пӑруламалли ӗне сутатӑп.**
**2000 ҫулта туса кӑларнӑ ВАЗ-21099 автомашина сутатӑп (66000 км ҫӳренӗ).**
**Телефонӗ: 8-927-862-64-20.**

**Паянхи номерӑн 5-6 страницисенче пай ҫӗрӗсен хуҫисен пӗлтерӗвӗсем заказ шучӗпе пичетленеҫҫӗ.**
**Ял тӑрӑхӗсенче паллашмалла.**



**ГУП ЧР “Моргаушский издательский дом”**
Моргаушская районная газета
"ҪӖНТЕРӲ ЯЛАВӖ"
УЧРЕДИТЕЛИ:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики.
Государственное унитарное предприятие Чувашской Республики “Моргаушский издательский дом”.
**Директор-главный редактор А.И. ТИХОНОВ.**

АДРЕС: 429530, Чувашская Республика, село Моргауши, улица Мира, дом 9.
ТЕЛЕФОНЫ: директор-главный редактор - 2-11-36, заместитель главного редактора - 2-12-82, бухгалтерия - 2-11-35, отделы: общественно-политической жизни, социальной жизни - 2-12-82, сельского хозяйства - 2-11-38.
E-mail: morpress@cbx.ru

Газета зарегистрирована управлением Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу. Свидетельство о регистрации СМИ ПИ № ФС 18-2329 от 15 августа 2005 года.

Газета выходит на чувашском языке по средам, субботам.
Печать офсетная, объем 1,0 п. листа. Тираж 3357.
Материалы на правах рекламы публикуются под знаком Р или рубрикой «Аталану ҫулӗпе».
Время подписания в печать в 17 час. 20 мин., подписано - в 17 час. 24.10.2006 г.
Заказ
Дежурный по номеру БЕЛОВ А.П.
ИНДЕКС ИЗДАНИЯ: 54822.

Номер набран и сверстан в ГУП “Моргаушский издательский дом”, отпечатан в типографии ГУП ”ИПК ”Чувашия”: 428019 г. Чебоксары, пр. И. Яковлева,13. Качество печати соответствует оттискам, предоставленным редакцией.